Йышăну

Тасалăхпа тирпейлĕх малта тăччăр

Районта ырă йăлана кĕнĕ тăрăх тата Муркаш енри санитарипе эпидемиологи, экологи лару-тăрăвне лайăхлатас, тасалăхпа тирпейлĕх тĕлĕшпе чи хăтлă яла палăртассипе çуллен ирттерекен смотр-конкурс пирки район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче йышăну кăларнă, ăна ирттерме комисси çирĕплетнĕ. Комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Г. Никитин ертсе пырать.

Йышăну кăларнипе пĕрлех смотр-конкурсăн положенине çирĕплетнĕ. Смотр-конкурс 5 енпе иртет: 1) йывăç-курăксемпе тулăх тата тирпейлĕ чи лайăх ял; 2) хăйне уйăрса панă участокри йывăç-курăксемпе тулăх тата тирпейлĕ, çумри территорисенче санитарипе хŭтĕлев тата сыхлав зонисем тытса пыракан организаци; 3) йывăç-курăксемпе тулăх тата чи тирпейлĕ социаллă сфера учрежденийĕ; 4) чи лайăх кил-çурт; 5) чечек кĕтесĕсемпе кану вырăнĕсем йĕркелесси.

Конкурса тăратнă объектсене хакланă чух тавралăха проектпа килĕштерсе ешĕллентернине, газонсемпе йывăçсем тата тĕмсемпе чечексем, кану кĕтесĕсем епле пулнине, территори тирпейлине, урампа кил картисен эстетикине, пĕчĕк архитектура формисене тата ачасен спорт лаптăкĕсене пăхса тăнине, тротуарсемпе автоçулсем çинчи тирпейлĕхе, çурт фасачĕсене, ăпăр-тапăр пуçтарассине йĕркеленине шута илеççĕ.

Суя кăтартусем тăратнă участниксене смотр-конкурсран кăлараççĕ.

Смотр-конкурс çĕнтерŭçисем укçан çакнашкал премисене тивĕçеççĕ:

а) йывăç-курăксемпе тулăх тата тирпейлĕ чи лайăх ялшăн 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш вырăнсене тухнисем 10 пин, 7,5 пин, 5 пин тенкĕ;

ă) хăйне уйăрса панă участокри йывăç-курăксемпе тулăх тата тирпейлĕ, çумри территорисенче санитарипе хŭтĕлев тата сыхлав зонисем тытса пыракан çĕнтерŭçĕ организацисем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ;

б) йывăç-курăксемпе тулăх тата чи тирпейлĕ социаллă сфера учрежденийĕ конкурсра мала тухнисем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ;

в) «чи лайăх кил-çурт» ята çĕнсе илнисем 3 пин, 2 пин, 1 пин тенкĕ;

г) «чечек кĕтесĕсемпе кану вырăнĕсем йĕркелесси» номинацире палăрнисем 1,5 пин, 1 пин, 0,5 пин тенкĕ.

Çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче пуçланнă конкурса çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕмлетеççĕ.

Хамăр инф.

«Вĕрентŭ» наци проекчĕ тавра

Ĕçре ырă ятлисем

Çатракассинчи вăтам шкул юлашки çулсенче ачасене пĕлŭ парассипе, шкулта спорт тĕсĕсене аталантарассипе, халăх культури çине тимлĕх уйăрассипе чылай малалла утăмларĕ. Вĕрентекенсемпе ачасен тата ашшĕ-амăшĕсен пĕрлехи тŭпи кунта тĕп вырăнта. Çакна хамăрăн кĕске калаçура иккĕмĕш çул вăтам шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Любовь Валерьевна Никитина та çирĕплетрĕ. «Ачасене тарăн пĕлŭ парассине хамăрăн тĕп тивĕçĕмĕр тесе шутлатпăр. Çакна пурнăç ыйтнă пек йĕркелесе пыма пур мелсемпе те анлă усă куратпăр. Иртнĕ Çĕнтерŭ кунĕнче çак шухăш уйрăмах малта тăчĕ. Пирĕн асаттесем Таван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашизма çапса аркатни тата çак паттăрлăха эпир паян ăнланса илни вĕрентŭре те çĕнĕлĕхсене хăвăрт алла илсе пыма пулăшать», – терĕ 19 çултах шкулта ĕçлеме пуçланă учительница. Малтанах, хăйĕн пурнăçне вĕрентекен куçĕпе кураканскер, Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлŭ паракан тĕп шкулта вожатăй пулса ĕçлесе тата куçăмсăр майпа Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтерсе вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекенĕн дипломне алла илнĕ.

Нумай шыв юхрĕ унтанпа. Паян Любовь Валерьевна 1-мĕш категориллĕ учительница, опытлă ĕçтеш, ачасен çывăх юлташĕ, ашшĕ-амăшĕшĕн ырă канашçă.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ŭкерчĕкĕ.

Килти хушма хуçалăх

Условисем меллĕ

Юлашки вăхăтри сивĕрех кунсем пахчаçăсен ĕçне мĕнле витĕм кŭчĕçши?

Б. БОРИСОВА.

Кăçалхи çанталăк ял çыннине пахча çимĕççем ăнăçлă туса илме меллĕ. Пулнă сивĕсем те, юлашки вăхăтри çумăрсем те çĕр ĕçченĕшĕн хăйне евĕр парне пулчĕç. Сивĕрех çанталăка пула пахча çимĕççене сăтăр тăвакан вăрăм сăмсасем, панулми хурчĕсем, курăк пыйтисем тата ытти хурт-кăпшанкăсем аталанаймарĕç. Юлашки кунсенчи çумăрсем вара тухăç çумăрĕсем пулчĕç. Пахчана имçам илсе кĕриччен çывăх малашлăхра улмуççисене помидорпа çĕр улми çеçкисенчен хатĕрленĕ шывпа сапни вырăнлă. Колорадо нăррипе, хăмла çырли тата викторипе хурлăхан çинчи сăтăрçăсемпе кĕрешме сухан хуппинчен хатĕрленĕ шыв та пулăшать.

Г. СИМАКОВ.

Самăртакан вăкăра тăрантарасси

Çу кунĕсем – йŭнĕ хăйхаклăхпа ытларах продукци илмелли тапхăр. Пире çак вăхăтра вăкăр тулăх ŭстересси интереслентерет. Çак йĕркепе паллаштараймăр-ши?

С. СЕМЕНОВА, А. АНТОНОВ.

Пăру ан чирлетĕр тата хăвăрт ŭстĕр тесен, ăна кĕтĕве яман тапхăрта сĕтеклĕ тата хытă апат ытлăн-çитлĕн памалла. Кунсăр пуçне рациона 2 килограмран кая мар концентрат хушмалла. 7- 8 уйăхри вăкăршăн талăкра вăл 1 килограмм çителĕклĕ. Манмалла мар, çитĕнекен выльăх рационĕнче сĕтеклĕ апат – 12, утă – 6, улăм – 2 килограмшар, апат тăварĕ 30 грамм пулмалла. 9 - 10 уйăхри вăкăр валли концентратпа утă виçине ŭстерме кирлĕ мар, анчах çĕтеклĕ апата 14 килограмм таранах çитермелле.

11-12 уйăхрине çĕтеклĕ апатпа утă тата улăм малтанхи пекех памалла пулсан, концентрата çур килограмм, апат тăварне 10 грамм хушмалла.

13 -14 уйăхри вăкăрăн талăкри рационĕнче концентрат - 2, сĕтеклĕ апат - 16, утă - 5, улăм – 4 килограмм, апат тăварĕ 45 грамм пулмалла.

Л.ИВАНОВ.

Крахмал пулăшать

Эпир пĕрлешŭллĕ хуçалăхран панă тулăран çăнăх авăртрăмăр. Анчах та унран çăкăр лайăх пулмасть. Вăл е чуста пек, е тăм пек пулса ларать. Йĕркеллĕ çăкăр пĕçерме мĕнле майпа усă курма пулать-ши?

А. ПЕЧКОВА, М. ИВАНОВА, А. КАПИТОНОВА.

Çак ыйтăва кил хуçи хĕрарăмĕсем час-часах хускатаççĕ. Хуравĕ вара ансат. Çăнăх япăххи тырăра клейковина сахал пулнинчен килет. Каламалла, юлашки хăш-пĕр çулсенче çанталăк начар тăнăран тĕллĕн-тĕллĕн тыр-пул йĕркеллĕ пулса çитмен тĕслĕхсем пулчĕç. Çавна пула тыр-пул пахалăхĕ тивĕçлĕ шая çитеймерĕ. Çавăнпа унран авăртнă çăнăх чусталлă пулать. Кун пек чухне çăнăх чустине кăштах крахмал хушмалла. Унри клейковина чустана чиперех хăпарма, çăкăра кăпăшка пиçме пулăшĕ.

О. АНДРЕЕВА.

Ĕне мĕншĕн апчăху тăвать?

Хисеплĕ редакци! Тахçантанпах ĕне тытатăп, анчах кун пеккине курман: сарай алăкне уçатăп çеç – ĕне апчăху тума тата ŭсĕрме пуçлать. Часах унăн пăруламалла. Пăрăвĕ хавшак çураласран шикленетĕп.

П. ПОЛЯКОВА.

Вулакан панă ыйту ниме те тăмасть темелле мар. Акă мĕн калаççĕ кун пирки выльăх-чĕрлĕх ăстисем:

– Сивĕ тăракан çĕршывсенче килти выльăха хĕлле витесене хупасси йăлара, унсăрăн вĕсем шăнаççĕ. Хăвăр ĕне çине тимлĕрех пăхса илĕр-ха: çăмĕ сайра, кĕске, ăшă начар тытать. Анчах выльăх пахалăхлă апат çинипе шалтан тухакан энергипе хăйне ăшăтнине шута илсен, 10-12 градус ăшă тăракан хупă хуралтăра вăл çак “тумтирпе” те аптăрамасть.

Ĕне пĕтĕ пулсан вара унăн шалти ресурсĕсем çитĕнекен пăрăва вăй илтерме ытларах каяççĕ. Ку вăхăта тăрантарассипе тата пăхассипе çыхăннă улшăнусене организм питĕ сисĕмлĕ пулса çитет. Ахăртнех çак тĕслĕхре ĕнене кŭкĕрт çитмест. Пăрăва çитĕнме шăпах вăл питĕ кирлĕ.

Кŭкĕрт организма çăм лайăх ŭсме, апата ирĕлтерме пулăшать. Çавна май ŭт-пĕве ăшăтма хушма энерги пухăнать (уйрăмах хĕлле). Вăл выльăх чĕрнине çирĕплетет, сĕтри çу хисепне 10–15 процент ŭстерет. Кĕскен каласан, пĕтĕ ĕнене тĕрĕс тăрантармалла. Чи усăлли кунта – кŭкĕртпе пуян комбикорм.

В. ИЛЬИН.

Пăру чиперех аталанать

Нумай пулмасть пирĕн ĕне пăруларĕ. Йывăррăн мар темелле, анчах вăл пăрăва çулламанни шиклентерет. Мĕне пĕлтерет-ши çакă?

С. ЯРИКОВА.

Ялсенче час-часах ĕне пăруланă хыççăн темшĕн вăл хăйĕн пăрăвне çуллаçшăн пулманни пăру ŭлĕмрен чирлĕ ŭсессе пĕлтерни тесе калаçаççĕ. Мĕн калама пулать-ха кун пирки?

Ĕне пăрăва çулласа унăн кĕлеткине хăйне евĕр массаж тăвать. Çакă çамрăк выльăхăн юн çаврăнăшне лайăхлатма, сывлăш çулĕсене уçма пулăшать. Анчах сайра-хутра выльăх пăрăва çулламан тĕслĕхсем те пулкалаççĕ. Уншăн пăшăрханмах кирлĕ мар. Пăрăва çийĕнчех улăм çыххипе, унтан хулăнрах татăкпа шăлса типĕтмелле, ăшă витене е пŭлĕме вырнаçтармалла. Çунă ĕне ыррине памалла. Малашне вăл чиперех аталанса пырĕ.

Н. СЕМЕНОВ.

Шăмат кунхи рубрика

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

Суд йышăнăвĕ тирпейлĕх майлă

Моргаушка юханшывăн Муркашри Набережная урамĕ тĕлĕнчи сылтăм çыранĕнче хăçан тирпейлĕх пулĕ?

В. ИВАНОВ.

Район прокуратури Муркаш ял тăрăхĕнче çут çанталăка сыхлассине тата санитари законодательствисене епле пăхăннине тĕрĕслерĕ. Çакă палăрчĕ: ял тăрăхĕнче йăлари каяшсене пуçтарса илсе тухассине тивĕçлипе йĕркелемен, ялсенче çакна валли контейнерсем вырнаçтарман. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе прокурор «Муркаш ял тăрăхĕ» муниципаллă йĕркелŭ тирпейлĕх ыйтăвĕсемпе çителĕксĕр ĕçленине палăртса çитменлĕхсене пĕтерме ыйтса район судне çыру-па тухрĕ: Моргаушка юханшывăн Муркашри Набережная урамĕ тĕлĕнчи сылтăм çыранне ăпăр-тапăртан тирпейлемелле. Прокурор ыйтăвне суд тивĕçтерчĕ. Йышăну саккунлă вăя кĕчĕ.

Г. ЕРЕМЕЕВА, район прокурорĕн пулăшаканĕ.

Ĕç укçи пирки

Пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕнче районти предприятисенче ĕç укçи тŭлесси мĕнлерех пырать тата унăн йĕрки мĕнлерех пулмалла?

А. СКВОРЦОВА.

Район территорийĕнчи предприятисенче ĕç законодательствине пăхăннине пăхса тăрасси – прокуратурăн приоритетлă ĕçĕсенчен пĕри. Пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕнче ку ыйту уйрăмах пысăк тимлĕх ыйтать. Предприятисене хупас, ĕçлекенсене чакарас ыйтусенче саккуна пăснă тĕслĕхсене вăхăтра сирсе яма эпир халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрпа, социаллă страховани фончĕпе, налук органĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр.

РФ Ĕç кодексĕн 136-мĕш статйин 6-мĕш пункчĕпе килĕшŭллĕн ĕç укçине организацин ĕç йĕркипе, коллективлă тата ĕç килĕшĕвĕсемпе коллективсенче уйăхра икĕ хутчен тŭлемелле.

РФ Ĕç кодексĕн 131-мĕш статйипе килĕшŭллĕн ĕç укçине укçалла памалла. Коллективлă е ĕç килĕшĕвĕсемпе пăхнă пулсан, ĕçлекен ыйтнипе ăна ытти формăсемпе те тŭлеме юрать. Анчах «укçасăр» формăллă ĕç укçи виçин уйăхри ĕç укçин 20 процентĕнчен иртмелле мар.

Эпир тăтăш ирттерекен тĕрĕслевсем хăш-пĕр ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕç укçин «укçасăр» форми ытларах вăй илнине кăтартаççĕ. Кунашкал предприятисен ертŭçсен ячĕпе саккуна пăснă тĕслĕхсене пĕтерме асăрхаттарусем тăратнă.

Е. КУЗЬМИНА, район прокурорĕн пулăшаканĕ.

Асăрханулăх кашнинех кирлĕ

Кĕсье телефонĕ çухалсан е ăна вăрласан тупма пулать теççĕ. Кунашкал тĕслĕх районта пур-и?

И. МИХАЙЛОВА.

Паян кĕсье телефонĕ пирĕнтен кашниншĕнех чи çывăх юлташ пулса тăчĕ. Ăна пурте харпăрлăхра тытма тăрăшать. Çак телефонсем йышланса кайни тата вĕсемпе усă кураканскем те пайтах пулни пурнăç кăларса тăратнă çак çăмăллăхпа саккуна пăсса усă курас текенсен йышне те самайлатрĕ. Анчах вĕсенчен чылайăшĕ паянхи техника вăй-халĕпе «çухалнă» çав телефонсене хуçисем милици ĕçченĕсем пулăшнипе тупма пултарнине аса та илмеççĕ. Кунашкал тĕслĕхсем вара пирĕн практикăра çине-çинех тĕл пулма пуçларĕç ĕнтĕ. Саккуна пăсса «хĕстернĕ» телефонсен çĕнĕ хуçисене йĕрке хуралçисен пулăшăвĕпе тупсан вара çак «ĕçпе» уголовнăй ĕç вăй илет. Кун пек чухне чавса çывăх та çыртма çук тенине çеç палăртма пулать. Кăçалхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ çакнашкал черетлĕ ĕçе пăхса тухрĕ. Темиçе кунлăх киленŭшĕн унăн хуçин саккун умĕнче ответ тытма тиврĕ. Малалла çыннăн самантлăх тимсĕрлĕхĕпе ют пурлăха хапсăнас тесе шутланă Н. Полуэктов пирки. Ку тĕслĕх ыттисемшĕн пысăк урок пуласса шанатăп.

... 2008 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕ. 8 сехет çывхарать. Кирпĕч заводĕнче ĕçлекен çамрăк арçын ĕçе кайма автобус çине билет илет те апат-çимĕç киоскĕ патне пырсан сентре çинче «хуçасăр» кĕсье телефонĕ выртнине асăрхать. Залра рейс кĕтекен пассажирсем те нумайăшăнах мар, телефонăн та хуçи çук. Ма ăна кĕсьене чикес мар? Кĕçех асăннă аппарат сиксе тухнă ыйту çине тĕрĕс хурав тупайман арçын кĕсйинче вырăн тупать. Кĕçех ун çине унченхи телефонăн СИМки те вырнаçать. Мĕнех, телефонлă пултăм теме те пулать ĕнтĕ. Măшăрĕпе кăнтăр тĕлĕнче калаçнă чух арăмĕ пĕрле ĕçлекенĕн телефонĕ çухални çинчен пĕлтерсен те арçын, ку хăйĕн ĕçĕ иккенне уçăмлă пĕлтерсе, пулса тухнă лару-тăрăва тĕрĕс хак пама васкамасть.

Ирлесех телефон çухатнă хĕрарăм вара ниепле те лăплана-ймасть. Ара, телефонне, çынсенчен кая юлас мар тесе, 10 уйăх маларах 6943 тенкĕ парса туяннăччĕ вĕт-ха! Унтакунта тĕплĕрех пăхнă, юлташĕсемпе калаçнă хыççăн хĕрарăм çухату (вăрлани) пирки шалти ĕçсен пайне пĕлтерет. Телефон хуçи хăйĕн кĕсье телефонĕн ятарлă номерне лайăх пĕлни пире çăмăллăх пачĕ те. «Билайн» компанирен Nokia 5200 телефонăн ятарлă номерĕ çине кĕнĕ номерсене пăхса сăнанă хыççăн телефонăн çул-йĕрĕ тупăнчĕ те.

Икĕ уйăх иртсен айăпа тата явма пуçланă вĕренĕн вĕçĕ çывхарнине ăнланнă вăрă каçарупа шалти ĕçсен пайне пычĕ. 2009 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче телефон саккунлă хуçи патне таврăнчĕ. Йĕркене пăсаканăн вара саккун умĕнче явап тытмалла пулчĕ. Район сучĕ Николай Евгеньевич Полуэктова Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 158-мĕш статйин иккĕмĕш пайĕнчи «в» пунктри айăпа тунă тесе йышăнчĕ, 10000 тенкĕ штраф парса ответ тыттарма приговор кăларчĕ.

Е. КРУГЛОВА, шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следствие уйрăмĕн следователĕ.